Кĕскен

Утарçăсем канашларĕç

Июнĕн 15-мĕшĕнче пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче, харпăр хăй килĕнче хурт-хăмăр тытакансемпе Е. Андреев яч. хис. хуçалăх утарĕнче канашлу иртрĕ. Ăна ял хуçалăх управленийĕн ертӳçин çумĕ А.И. Павлов ертсе пычĕ. Малтанах пухăннисене Н.В. Рудаков хуçалăх пирки тата кунти утар ĕçĕсемпе паллаштарчĕ.

Районти хурт-хăмăр отраслĕн аталанăвĕпе ЧР Ял хуçалăх министерствин "Хурт-хăмăр агентствин" Муркаш районĕнчи зоотехник-хатĕрлевçи П.В. Семенова паллаштарчĕ.

Паянхи куна районта 14 пĕрлешӳллĕ хуçалăхра 16 утар пур. Вĕсенче хурт-хăмăр йышĕн 781 çемйи хĕле кĕнĕ, çăва 763 çемье тухнă. Чакнин сăлтавĕ çакăнта: "Восток" хуçалăх утара сутса янă, "Передовик" хуçалăхра виçĕ çемье вилнĕ. Ытти çĕрте вара тĕрĕс-тĕкел ĕçлесе пыраççĕ. Палăртмалла, юлашки çулсенче пирĕн районта "Приокский" ăратлă хурт ĕрчетес ĕç аталанма пуçларĕ.

Канашлăва ЧР Ял хуçалăх министерствин "Хурт-хăмăр агентствин" ертӳçи Г.А. Максимов хутшăнчĕ, республикăри лару-тăрупа паллаштарчĕ. Утар ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсем пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Пухăннисене практикăра çемьене çамрăк ама лартса парассине тата çемье уйăрассине кăтартса пачĕ. Çакна та палăртма кăмăллă, Е. Андреев яч. хис. хуçалăх утарне агентство ертӳçи Г.А. Максимов ăратлă амасем пиллĕк тата тĕрлĕ инвентарь парнелерĕ. Малашне çĕнĕ технологипе тупăшлă ĕçлеме сунчĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Сăн ӳкерчĕкре: хурт-хăмăр ăстисем.

Обществăлла организацисенче

Спортпа туслă

Паянхи пурнăçра кашни çыннăн пурнăçпа тан пыма, ăс-тăн культурине аталантарма, çавăн пекех спортпа туслашма тăрăшмалла. Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ пулнă май районти инвалидсем те тăтăшах пухăнса пултарулăха туптаççĕ, тавра курăма аталантараççĕ. Инвалидсемшĕн пĕрле пухăнни,çапла майпа хăйсене тăватă стенаран хăтарни вĕсемшĕн питех те кирлĕ. Çак тĕллевпех июнĕн 14-мĕшĕнче Элĕкре шашка, шахмат, дартс вăййисен ăмăртăвĕ иртрĕ. Муркаш чысне хӳтĕлеме сакăр инвалид-спортсмен социаллă политика управленийĕ, куç курманнисен тата инвалидсен пĕрлĕхĕ йĕркеленипе çитсе килчĕç.

Шахматла выляса Ю.Г. Щегольков 1-мĕш вырăна, Е.Н. Осипов 2-мĕш вырăна тухса, Г.А. Васильева тăрăшупа пултарулăх кăтартса "За упорство" номинаци дипломне тивĕçрĕç.

Шашка ăмăртăвĕнче А.А. Ермолаев 1-мĕш вырăн, Е.Н. Осипов 2-мĕш вырăн çĕнсе илчĕç.

Дартс вăййисенче 1-мĕш вырăна Е.О. Афанасьев, 2-мĕш вырăна Е.Н. Кроликов тивĕçрĕç. Ăмăрту йĕркелӳçисем унта хутшăннă кашни спортсмена диплом тата асăнмалăх парне парса хавхалантарчĕç. Спонсорла пулăшу пама районти Йăла çурчĕ (ертӳçи А.П. Давыдов) тата "Единая Россия" партин районти уйрăмĕ кăмăл турĕç.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Сăн ӳкерчĕкре: ăмăртура пулнисем.

Сăмах – прокуратура ĕçченне

Милици сыхлать-и е унран сыхланмалла?

Суд реформисене иртернĕ вăхăтра патшалăх аппарачĕсене çирĕплетнĕ йĕркепе ĕçлеттернине, должноçри çынсем дисциплинăна пăхăннине пăхса тăрас ĕç обществăн тата патшалăхăн саккунлă интересĕсене, граждансен интересĕсемпе прависене уголовлă-правăллă хатĕрсемпе уголовлă-юстици хутшăнăвĕсен сферине пырса тĕкĕнмен гражданла правăллă сферăра сыхлас çĕрте çеç мар, уголовлă-правăллă хутшăнусен сферине хăйне те пырса тивет. Çӳлерех асăннă обществăлла хутшăнусене сыхлани пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланса районти прокуратура çителĕклĕ ĕçсем туса ирттерет. Февраль уйăхĕнче кăна Муркаш район прокуратури должноçри йывăр преступление тунă пирки право сыхлавĕн органĕсен сотрудникĕсем тĕлĕшпе пуçарнă уголовнăй ĕçе пăхса тухрĕ. Мĕнле ĕçха вăл?

Следстви çакна кăтартса пачĕ: Я. тата Ф. гражданнисем (хушамачĕсене улăштарнă – авт.), районти шалти ĕçсен пайĕнче ертсе пыракан тивĕçсене пурнăçлаканскерсем, хăйсен ятарлă офицер званийĕсем пуррине тата хăйсем влаç представителĕсем пулнине пăхмасăр "Милици çинчен" РФ Саккунĕ тата службăпа ĕç йĕркинче саккунлăха çирĕп пăхăнма ыйтакан должноç инструкцийĕ хăйсем çине хунă служба тивĕçĕсене пурнăçланă чух вăйпа усă курса, должноç тивĕçĕсенчен иртсе кайнă. Çакă гражданинăн правипе саккунлă интересĕсене пăсни патне илсе çитернĕ. Ĕç çапла пулса иртнĕ.

2005 çулхи октябрĕн пĕр кунĕнче асăннă милици сотрудникĕсем «киккирикĕсене хĕртнĕ» хыççăн обществăлла пырăнта унччен палламан тата обществăлла право йĕркине пăсни курăнман С. гражданин патне пыраççĕ. Хайхискер унччентерех судпа айăпланнине тата ирĕкрен хăтарнă вырăнтан условно-вăхăтсăр тухнине пĕлсен, хăйсем йĕрке хуралçисем пулнине палăртса саккунран тухнă ĕçĕсемпе хăйсене пана виçерен тухнине пĕлсе тăрсах "Милици çинчен" РФ Саккунĕн 12, 13 статйисене пăсса хăйсем хушшинче килĕшсе С. гражданина ыраттарас, ӳт-кĕлеткене суранлатас, мораль тĕлĕшĕнчен асаплантарас тĕллевпе кĕлеткен тĕрлĕ вырăнĕсенчен алăпа-урапа тапса-çапса пĕтереççĕ. Çакăн хыççăн асăннă "ĕçченсем" хăйсене саккун панă полномочисенчен иртсе С. гражданин чарăнма ыйтнине пăхмасăр тата хăйсене хирĕç тăманнине шута илмесĕр хăйсем тапса-çапнинчен ыратнине туяканскерне РФ КоАПĕнчи 20.21 статьяра пăхнă административлă правăна пăснине палăртма – йĕркене кунашкал пăсни çуккине пĕлсе тăрсах – вăйпа усă курса районти шалти ĕçсен пайĕ еннелле илсе каяççĕ. С. гражданин Япа Ф. гражданинсен саккунсăр хăтланăвне хирĕçлет. Çакна курса Я. тата Ф. гражданинсем район сучĕн çурчĕ умĕнче С. гражданина юриех, ыраттарас тĕллевпе, нумай çĕртен алăпа, урапа тапса-çапса пĕтереççĕ. Шалти ĕçсен пайне çитсен ăна Я. ĕçлекен служебнăй пӳлĕме илсе кĕреççĕ. Унта каллех хăйсем саккуна пăснине пĕлсе тăрсах служба тивĕçĕсенчен иртсе, Раççей Федерацийĕн "Милици çинчен" Саккунĕн 12пе 13-мĕш статйисене сĕмсĕррĕн пăсса (унта вăйпа хăçан усă курмаллине палăртнă), хăйсен обществăлла хăрушлăхне пĕлсе тăрсах çак "ĕçе" тăвас тĕллевпе – С. гражданин тархасласа хăйне шалти ĕççен пайĕнчен кăларса яма тата хĕнеме чарăнма ыйтнине пăхмасăр – хăйсем хушшинчи килĕшӳпе хайхискере ыраттару тата ӳткĕлеткене суран кӳрес, мораль тĕлĕшĕнчен асаплантарас тĕллевпе (çакна валли нимĕнле никĕс те пулман) пит-куçран тата пуçран алă-урапа нумай тапса-çапса пĕтернĕ.

Фпа Я. преступлă ĕçĕсене пула инкек тӳсекен Сна ыратту, асаплантару, ӳт-кĕлеткене суран кӳнĕ: сулахай куç çинче аманчăк, пит çинче кăвакарнă вырăнсем пур, çӳлти икĕ шăл катăлнă.

Кунпа Фпа Я. С. гражданинăн саккунлă интересĕсемпе Конституци правине сĕмсĕррĕн пăснă, патшалăх влаçĕн органĕн авторитетне – шалти ĕççен пайĕн ятне – варалана. Кулленхи пурнăçра вара шалти ĕççен пайĕн ĕçченĕ гражданнисене вĕсен саккунлă прависемпе интересĕсене хӳтĕлеме пулăшмалла, хăйсен ĕçне Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн шайĕнче пурнăçламалла, Раççей милицийĕн ятне общество куçĕнче çӳллĕ шайра тытмалла.

Хăйсен хăтланăвĕсемпе Япа Ф. гражданнисем Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 286 статйин 3-мĕш пайĕнчи "а" пунктра пăхнă преступление тунă.

Асăннă фактпа Чăваш Республикин Прокуратури уголовнăй ĕç пуçарчĕ. Муркаш район прокурорĕ следстви ĕçне тума мана хушрĕ. 3,5 уйăх пынă следстви ĕçĕнче айăплисем активлă хирĕç тăнине çĕнтерсех тĕрĕслĕх патне çитрĕмĕр. Следстви ĕçĕнче Чăваш Республикин сăнав прокурорĕ тата район прокуратурин опытлă сотрудникĕсем пулăшнипе нумай свидетельсемпе тĕл пулса ыйтса пĕлтĕмĕр, 9 экспертиза ирттертĕмĕр, преступлени тунисен айăпне çирĕплетекен нумай доказательствăсем тупрăмăр.

Должноçри йывăр преступление тунăшăн айăплисен саккун умне ответ тытма тăма тиврĕ. Уголовнăй ĕçе район судне тăратрăмăр.

Çак кунсенче асăннă ĕçпе суд пулса иртрĕ. Суд ку ĕç йывăр преступленисен шутне кĕнине палăртрĕ. Суд тенкелĕ çине ларнисен айăпĕ унта пĕрешкел тесе пĕтĕмлетрĕ. Çапла вара Раççей Федерацийĕн уголовлă-процессуаллă Кодексĕн 303, 304, 307–310 статйисемпе килĕшӳллĕн район сучĕ милиционерсем РФ Уголовнăй Кодексĕн 286-мĕш статйин 3-мĕш пайĕн "а" пунктĕнче пăхнă преступление тунинче айăплă тесе пăхрĕ, кашнинех 3 çул ирĕкрен хăтарма тата приговор саккунлă вăя кĕнĕренпе 2 çул хушши патшалăх службинче тата вырăнти самоуправлени органĕсенче ĕç вырăнĕ йышăнас правăран хăтарма йышăнчĕ.

Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 73 статйипе айăплава условно тесе йышăнчĕç, кашнинех çак обязанноçсемпе икĕ çул тĕрĕслев срокĕ панă: çирĕплетнĕ кунсенче пурăнакан вырăнти уголовнăй-исполнительнăй инспекцие пырса регистрациленмелле, çак инспекцие пĕлтермесĕр адреса тата ĕç вырăнне улăштарма юрамасть.

Инкек тӳсекен тĕлĕшпе вара унăн гражданла искне тивĕçтерме право пуррине шута илсе ăна гражданла судопроизводствăна пама пăхса хăварчĕç.

М. ТАРАСОВ,
Муркаш район прокуратурин следователĕ.

Н. Федоров республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен редакторĕсемпе журналистсен тĕл пулăвĕнче каланинчен

– Паян эпĕ пурăнмалли пӳлĕмшĕн тата коммуналлă пулăшусемшĕн тӳленĕ чухне граждансене патшалăх пулăшăвĕ тата социаллă хӳтлĕх парасси çинчен Указа алă пусрăм.

Ку йышăнăва тума çакă хистерĕ, 2006 çулта пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусен тарифĕсем ӳсни, федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн халăх çав пулăшусемшĕн 100 проценчĕпех тӳлеме тытăнни, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн Правительстви 2005 çулхи çурла уйăхĕн 29-мĕшĕнче 541№ "Пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлемелли федераци стандарчĕсем çинчен" тунă йышăну граждансен умне пулăшусемшĕн тӳлес ĕçре пысăк йывăрлăх кăларса тăратрĕ. Ку вăл пĕччен пурăнакан пенсионерсене тата сахал тупăш илекен граждансене уйрăмах пырса тиврĕ, вĕсен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлесси 2005 çулхи шайран 150-160 процент ӳсрĕ.

Чăваш Енри çак категорири граждансене пулăшас тĕллевпе эпĕ Министрсен Кабинетне пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлес ĕçре граждансене социаллă пулăшу памашкăн (Республика кунĕ ячĕпе парне пултăр) чи кĕске хушăра хушма мерăсем йышăнма хушрăм.

Указа пурнăçа кĕртнипе çакăн пек пулăшу илекенсен йышĕ икĕ хут ӳсет, 46 пин çемьене çитет. Вĕсем кăçал 230 миллион тенкĕрен кая мар перекетлеççĕ, çав укçана, Указпа килĕшӳллĕн, республика бюджечĕ тӳлет. Çав хушăрах влаçăн муниципалитет органĕсен социаллă хӳтлĕх кирлĕ граждансем тӳленĕ укçана кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен тепĕр хут шутласа пама тивет.

Урăхла каласан, Указ хăйĕн каяллахи вăйне таврăнать.

Юн кунсенчи рубрика

САККУН ВĂЛ ПУРИНШĔН ТЕ ПĔРРЕ

Паян рубрикăна район прокурорĕн пулăшаканĕ, 3-мĕш класлă юрист Сергей Александрович Кабуркин ертсе пырать

ШЫВ ХĔРРИ ТАТА ЙĔРКЕ

Район территорийĕнче Атăл хĕрринчи зонăсемпе пурте тирпейлĕ усă кураççĕ-и? Ĕç çыннисен йĕркеллĕ канăвĕ пирки шутлакан пур-и?

И. КВАСОВА,
А. СЕМЕНОВА.

Çынсем канупа пĕрлех çут çанталăк илемĕ пирки те шутлама манманни хăех ырă пулăм. Çакна район прокуратури те кун йĕркинчен кăлармасть. Акă, нумаях пулмасть Атăл юхан шывĕ хĕрринче объектсем вырнаçтарнă чух вĕсен хуçисем çут çанталăка сыхлас законодательствăна епле пăхăннине тĕрĕслерĕмĕр. Тӳрех каламалла, çитменлĕхсемсĕр пулмарĕ. Лайăх кану вырăнĕ шутланакан Мăн Шашкар заливĕнче хăйсен курорт бизнесне виçĕ организаци йĕркеленĕ: СТРОМОН-КИТР, чикĕллĕ яваплăхлă "ЗАЛИВ" общество, чикĕллĕ яваплăхлă "РУСЬМАРКЕТ" общество. Вĕсемсĕр пуçне çак тăрăхрах "Волгодорстрой" уçă акционерлă общество хальлĕхе документсемпе çирĕплетмесĕрех хăйăр хурассине йĕркеленĕ. Юлашки тĕслĕхпе район прокуратури асăннă организацин генеральнăй директорĕн ячĕпе административлă ĕç пуçарчĕ. Курорт бизнесне уçнă организацисем вара çĕрпе усă курас тĕлĕшпе çитменлĕхсемлĕ пулни палăрчĕ. Çавăнпа вĕсен директорĕсем ячĕпе те предписанисем çырма лекрĕ.

Асăннă тĕрĕслев малалла та пырать. Çывăх вăхăтрах эпир Ильинка тăрăхĕнче Атăл хĕррипе пулăççем çĕр участокĕсене саккунлă е саккунсăр йышăннине тĕрĕслĕпĕр.

ĔÇ УКÇИ МАЛТИ ВЫРĂНТА

Юлашки вăхăтра ĕç укçин парăмĕсем пирки калаçу шăпланчĕ. Ĕç паракансем совеçсе туйса ĕçлеме пуçларĕçши е тивĕçлĕ органсем ку ыйтăва хăй еккипе ячĕç?

С. САПОЖНИКОВ.

Ку ыйту çынсен тĕрĕслевĕнче тăни малашлăха пăхтарать. Тӳрех калатăп, тивĕçлĕ органсенчен район прокуратури вулакан хускатакан ыйтăва тăтăшах кун йĕркинче тытать те Ĕç законодательствин ĕç укçи пирки калакан пайне тĕрĕслесех тăрать. Акă, кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта ĕç укçипе парăма кĕрсе кайнă 12 предприяти пулнă, вĕсен пĕрлехи парăмĕ тăватă миллион тенкĕне яхăн пулнă, ĕç укçине вăхăтра илейменнисен йышĕ 1100 çыннăвĕ. Ку çитменлĕхе пĕтерессипе тĕллевлĕ ĕçленĕрен июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне парăмçăсен хисепĕ пиллĕке юлчĕ, парăм виçин сумми те 8 хут чакса 530 пин тенкĕне юлчĕ. Ĕç укçи вăхăтра илейменнисен йышĕ те 1100 çынран 270 çынна çитрĕ. Çак тапхăрта ĕç укçипе парăма ӳстерсе янă ертӳçĕсемпе тĕп бухгалтерсем тĕлĕшпе 14 административлă ĕç пуçартăмăр, 15 представлени кăлартăмăр. Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçи пирки вара ĕç укçине тӳлессине икĕ уйăхран ирттерсе янăшăн уголовнăй ĕç пуçартăмăр, малтанхи следстви ĕçĕсем пыраççĕ.

Юлнă 5 парăмçă пирки каласан, ĕç укçипе пулса тухнă парăма чакарассине паянхи çăмăл мар лару-тăрура Муркашри кирпĕч завочĕпе К.Иванов яч. хис. хуçалăх уйрăмах тăрăшуллă пулни курăнать. Пĕрремĕшсен парăмĕ кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне 504 пин тенкĕ пулнă пулсан, июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăл виçе 105 пин тенкĕне юлчĕ. К. Иванов яч. хис. хуçалăх вара çулталăк пуçламăшĕнчи 260 пин тенкĕ парăмран ăна 180 пин тенкĕне çити чакарчĕ.

ПАХАЛĂХШĂН ТĂРĂШСА

Паян пахалăх малти вырăнта. Эпир хваттершĕн тӳлетпĕр, анчах тӳлеменнисем те йышлăн вĕт?

Редакцие шăнкăравланинчен.

Çапла. Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхсен услугисемшĕн вăхăтра тӳлеменнисем пирки кăçал кăна суда 140 заявлени тăратрăмăр, пурĕ 600 пин ытла тенкĕлĕх. Кунта гражданнисене пахалăхлă услугăсем парасси пирки те манмалла мар. Акă, халăхи вăхăтра эпир М. гражданкăн çăхавне тишкеретпĕр. Унта вăл нумай вăхăт хушши коммуналлă услугăсем пахалăхлă пулманран чире кайни пирки калать.